Канаш районĕн тĕп библиотеки

Информаципе библиографи пайĕ

# Талантлă тĕпчевçĕ, тӳрĕ чунлă критик

*/Юрий Михайлович Артемьева 80 çул/*

## Биобиблиографи справочникĕ



Шăхасан сали
2021 ç.

**К 83**

**Т- 16**

Талантлă тĕпчевçĕ, тӳрĕ чунлă критик (Юрий Михайлович Артемьева – 80 çул): биобиблиографи справочникĕ / Канаш район тĕп библиотеки; Л. И. Евгеньева пухса хатĕрленĕ. – Шăхасан, 2021. – 17 с., сăн ӳкерчĕксем.



**Тупмалли**


Умсăмах ……………………………………….4

Кĕскен…………………………………… 5, 6

Вăрçă ачи……………………………………7

Ĕç пуçа уçăлтарать…………..……………..8, 9, 10

Мĕнле çемье – çавăн пек пурнăç

никĕсĕ…………………………………….10,11

Ĕмĕт………………………………..…….11,12

Шăпана улăштарнă йыхрав хучĕ…………13,14

Наука ĕçĕ киленĕç кўрет…………………..14,15

Библиографи (ĕçĕсем)…………...………...15

Библиографи (ун çинчен)..………………...16,17,18




# Умсăмах

Юрий Михайлович Артемьев 1941 çулхи кăрлачăн 30-мĕшĕнче Канаш районĕнчи Сиккасси салинче çуралнă. Хусан патшалăх университетĕнче вĕреннĕ. Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институтĕнче ĕçленĕ, ЧР Профессионал писательсен союзĕн председателĕн заместителĕ пулнă, Чăваш патшалăх университетĕнче аслă преподавательте, кафедра доцентĕнче, кафедра ертӳçинче тăрăшнă. Хальхи вăхăтра вăл – вырăс чĕлхипе литературин кафедрин профессорĕ.

Юрий Михайлович – уçă кăмăллă çын. Пĕрле вăй хуракансем унпа юнашар ĕслеме кăмăллă теççĕ. Вăл яланах çамрăксене пулăшма, кирлĕ канаш пама хатĕр, ĕçтешĕсене хисеплет, ăнланать.

Юрий Михайлович Артемьев 80 çул тултарнине халалласа район библиотекин информаципе-библиографи пайĕ «Талантлă тĕпчевçĕ, тӳрĕ чунлă критик» ятпа биобиблиографи справочникĕ пухса хатĕрленĕ. Кунта Юрий Артемьевăн пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлне кĕскен çутатнă. Библиографи информацийĕ пур. Справочник массăллă вулакана валли.












# Кĕскен

Юрий Михайлович Артемьев ялти вăтам шкулта вĕреннĕ чухнех литературăпа кăсăкланма пуçланă. «50-мĕш çулсенче» Канашри «Коммунизмшăн» хаçатра пĕчĕк заметкăсем пичетленсен епле савăннине халь те лайăх аставатăп, - тет Юрий Михайлович. – Ун чухне редактор А. Ф. Каховскийччĕ. Пит савăнтарма, хавхалантарма пĕлетчĕ ялтан пынă шĕвĕрсене. Чунлă этемччĕ. Ю. Гуляшов псевдонимпа та çыркалаттăмччĕ хăш чух».

Юрий Михайлович 1959 çулта Çĕпĕре вербовкăпа тухса каять. «Çак тапхăр маншăн калама çук пысăк çул пулчĕ. Çанă тавăрса, пусăрăнса ĕçлеме вĕрентрĕ», - аса илет халĕ Юрий Михайлович.

Çар служби хыççăн 1964 çулта Хусанти В. И. Ульянов-Ленин ячĕллĕ университетăн историпе филологи факультечĕн вырăс чĕлхипе литературин уйрăмне вĕренме кĕнĕ. Кунта вăл литературăна тĕпчемелли мелсемпе меслетсене тимлесех алла илнĕ. Юрий Гуляев профессор ертсе пынипе чăваш литературинчи романтизм меслечĕ епле аталанса пыни çинчен диплом ĕçне çырса ăнăçлă хӳтĕлет.

Ю. М. Артемьевăн малтанхи тĕпчев ĕçĕсем 1970 çулта «Тăван Атăл» журналта пичетленеççĕ. «Пурнăç чăнлăхĕ е романтизм» статьяра вăл халиччен çырман ыйтусене хускатать çеç мар, ăна тĕплĕн уçса панипе палăрать. Кивĕ çулпах чуптаракан хăш-пĕр критиксемпе литературоведсем çамрăк тĕпчевçĕн ĕçне «шăртланса» йышăнаççĕ, анчах та çакă Ю. М. Артемьева татах та тĕплĕнрех ĕçлеме хистет, вĕренме хавхалантарать. 1969-1971 çулсенче ăслăлăхпа тĕпчев институтĕнче ĕçлет.

1971-1974 çулсенче вăл Мускаври А. М. Горький ячĕллĕ Тĕнче литератури институтĕн аспирантуринче вĕренет, 1977 çулта çакăнтах паллă ученăй, филологи наукисен докторĕ Н. С. Надьярных ертсе пынипе филологи наукисен кандидачĕн диссертацине ăнăçлă хÿтĕлет, çав çулах Ю. М. Артемьевăн пĕрремĕш монографийĕ «Становление социалистического реализма в чувашской литературе» Шупашкарта çапăнса тухать. 1978 çулта ăна СССР Писательсен союзĕн членне илеççĕ. Ĕçлеме пултарнине кура, чăваш литератури интересĕсене малти вырăна хунине шута илсе Юрий Михайловича Чăваш Республикинчи Писательсен союзĕн правленийĕн председателĕн çумĕ пулма суйлаççĕ.

12 кĕнеке («Этем тивĕçĕ» (1980), «Пурнăç чăнлăхĕпе сăнарсен илемĕшĕн» (1984), «Ирĕк шухăшсем» (1991), «Ĕмĕр пуçламăшĕ» (1996), «Чăн тÿпери çич çăлтăр» (2010) т. ыт. те), 260 ытла статья авторĕ. «XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи чăваш литератури» (1992) тĕпчев чăваш литературоведенине тата ытларах аталанма пулăшнă пысăк утăм пулса тăнă.

И. Я. Яковлев хайлавĕсен, докуменчĕсемпе çырăвĕсен пуххине пичете хатĕрленĕ, К. Ивановпа Çеçпĕл Мишши, В. Рзайпа Е. Еллиев, А. Артемьевпа А. Емельянов пултарулăхне тĕплĕн тĕпченĕ. Республикăри хаçат-журналсăр пуçне «Дружба народов», «Волга», «Филологические науки», «Вопросы литературы» журналсенче, «Литературная Россия» хаçатра нумай пичетленнĕ.

Француз чĕлхине пĕлет, нимĕç, испан, итали чĕлхисем те илĕртеççĕ ăна. Альфонс Доде, Андре Моруа хайлавĕсене французларан чăвашла тÿрремĕн куçарать.

## *Аса илӳсем*

## Вăрçă ачи

Пирĕн çемьере тăватă ача, эпĕ тата иккĕмĕш пуслăхран виçĕ йăмăк. Анне, Екатерина Васильевна, темле çапла ӳстерме пĕлнĕ пире – уйăрса тăмастпăр аттесене пăхса. Халь те эпир питĕ туслă. Пĕр-пĕринпе çыхăну тытсах тăратпăр. Пурте аслă пĕлӳллĕ, çемьеллĕ. Икĕ йăмăк Шупашкартах, Елена – куç тухтăрĕ, Люба – биолог. Анастасия Уренгойра пурăнать, вăл химик-технолог.

Ачалăха аса илес пулсан, пĕрремĕш аса илӳ эпĕ тăваттăра чухнехи пуль. Урампа шеренгăпа резерв салтакĕсем утаççĕ. Эпĕ чӳрече ани çине тăнă та вĕсенчен куç илми пăхса тăратăп. Мана ун чухне куççăр асаннепе хăварнă та урама тухайман ĕнтĕ эпĕ. Каярахпа, вăрçăн тăваттăмĕш çулĕ пынă чух, фронтран таврăнма пуçларĕç. Пĕри урине хăварнă вăрçă хирĕнче, тепри – аллине. Атте вăрçăран таврăнсан ун чĕрçи çинче ларнине астăватăп тата. Унăн наградисене ытараймасăр пăхнине, пĕчĕк пӳрнесемпе сĕртĕннине…



Тăван килте: амăшĕ Екатерина Васильевна, йăмăкĕсем: Любовь (юнашар), Еленăпа Анастасия (сулахайран сылтăмалла)

# Ĕç пуçа уçăлтарать

Шкулта вĕреннĕ чухнех тăван чĕлхепе литературăна çав тери юрататтăм. Сочиненисем лайăх çыраттăм. Софья Константиновна Суранова ватă учительница пурччĕ пирĕн. Питĕ ырă кăмăлласкер, хавхалантарма пĕлетчĕ. Паянхи пек астăватăп пĕрремĕш хут ирĕклĕ темăпа сочинени çырнине. Вĕрентекен ман ĕçе вуласа тухрĕ те çав тери мухтаса пĕтерчĕ вара.

Нимĕç чĕлхи урокĕсене килĕштереттĕм. Учителĕ те мана юрататчĕ. Тĕлĕнсе каймалла, ман характер çаплаччĕ, педагог мана юратать пулсан, килĕшмен предметпа та пуринчен лайăх вĕренме пултараттăм. Вĕрентекене пула предметран сивĕнни тен пулнă.

Пиллĕкмĕш-улттăмĕш классенче стена хаçачĕ кăларма пысăк хут листи, ачасем çырнă темиçе заметка киле парса яратчĕ учитель. «Ыттине хăв ÿкер, хăв çыр»,- тетчĕ. Çиччĕмĕш класра чухне литература кружокне çÿреме пуçланăччĕ. Сăвăсем çыраттăмăр. Чăнласа вулама пуçларăм ун чухне, Кĕнекесене чăннипех «тапăннăччĕ». Чăвашла куçарнă «Одер çинчи çуркунне», «Пуççăр юланут», «Робинзон Крузо», «Спартак» хайлавсене шĕкĕлчесе тухнăччĕ. Пĕррехинче математика урокĕ вăхăтĕнче чĕркуççи çине хунă та Войничăн «Пăван» романне вăрттăн вулатăп. Учитель асăрхарĕ те парта айĕнчи кĕнекене кап! тытса илчĕ манран. Çуркуннеччен тавăрса памарĕ. Шкулти библиотекăран урăх памарĕç. Клуб кĕнекисемпе тăранса пурăннăччĕ вара. Мĕн вуланине тетраде çырса пыраттăм.

Тумтир тĕлĕшĕнчен питĕ чухăн пулни кăмăла пăсатчĕ. Сайра хутра атă илсе пани пулнă, ăна та кашни кун

тăхăнман. Шкултан вĕренсе тухсассăн Омск хулине чукун çул юсанă çĕре тухса кайрăм. Икĕ çула яхăн унта пултăм. Çынпа калаçма, йывăр ĕçрен хăрамасăр пурăнма унта вĕрентĕм ĕнтĕ. Çан-çурăм та унтах çирĕпленчĕ. Пăхмасăрах йывăр рельссемпе шпалăсене çапа-çапа вырнаçтарма пуçланăччĕ. Унта вĕт пĕр сантиметр та йăнăшма юрамастчĕ. Çын теме те вĕренет çав. Хăвăрт хăнăхрăм унти пурнăçа. Вакунра пурте пĕрле çĕр каçаттăмăр. Хаваслă пек туйăнатчĕ ун чух пурнăç, нимĕнле йывăрлăха та туйман. Ним ытлашши те кирлĕ пулман вăл вăхăтра.

Ĕç укçипе тум туяннăччĕ. Салтака кайма хут илсен малтан яла таврантăм та, купăспа баян туяннăччĕ вара ун чухне.



Сиккасси шкулĕнче пĕр класра вĕренекенсемпе (сулахайран тăваттăмĕш), 8-мĕш «А» класс. 1955 ç.

Шăпана питĕ тав тăватăп, пысăк шкул пулчĕ машăн чукун çул çинче ĕçлени. Халь эпĕ çур кун сĕтел хушшинче

ĕçлесе ларма пултаратăп, тепĕр çуррине пахчара е вăрманта ирттеретĕп. Пĕр çĕрте ларни çыншăн усăллă мар, пуçа çеç ĕçлеттермелле мар – кĕлеткене те хускатмалла. Ывăнни йăлтах иртсе каять вара – ĕç чуна та, пуçа та уçăлтарать. Çаплах эпĕ кĕнекесем çырнă, диссертацисене хатĕрленĕ. Спорта, ĕçе юратман пулсан кун чухлĕ ĕслейместĕмех пуль тетĕп.

Салтакра пулни характера та, кĕлеткене те, ăс-хала та вăйлатма пулăшрĕ. Нумайăшĕ вăхăт çухатрăм тесе кулянать. Маншăн çухату пулмарĕ сĕхметре тăни. Сержантсен шкулĕнче вĕрентĕм. Отделени командирĕ пулса килтĕм унтан. Пĕр йыш пулнă эпир, салтаксем, ун чухне. Ывăлăм вара Чечняра пулса килчĕ. Такама пăхнă ман Атнер, питĕ çирĕп кăмăлласкер. Çапах таврăнсассăнах макăрни те пулнă. Вăл каласа панисене лăпкăн итлесе ларма çук – чуна пырса тивеççĕ. Халь ура çине тăнă, иккĕмĕш аслă пĕлӳ илет.

## Мĕнле çемье – çавăн пек пурнăç никĕсĕ


Мăшăрĕпе Ангелина Георгиевнăпа 1971 ç

Совет саманинче, тĕрĕссипе каласассăн, патшалăх уйрăм çын кил-йышне сăмса чикме юрататчĕ. Пухусенче упăшкипе арăмĕ икĕ тĕрлĕ шухăшласа пĕр-пĕринпе тăшмана тухса кайни те пулнă.

Юрать, ман çемьери лару-тăрăва пырса тивмен самана тӳнтерĕсем. Мăшăрăм Ангелина Георгиевна – педагог. Эпĕ Писательсен союзĕн председателĕн çумĕ пулса курнăччĕ те каçсерен киле

вăхăтра çитейменни те, çĕрле хăнасемпе çӳрени те час-часах пулнă. Арăм ăнланатчĕ, ахальтен чăркăшланса чашăк-тирĕк шăкăртаттармастчĕ. Вăл та манăн яланах килте пулаймастчĕ те-ха – каçхи шкулта ĕçлерĕ ĕмĕрĕпех. Арçын алли çеç мар, хĕрарăм алли çитменни те хуçалăхра тӳрех курăнать. Упраса хăварайрăмăр чиперех çемьене, тавах Турра.. Йывăрлăхсем пирĕн çемье никĕсне çирĕплетрĕç çеç.



6 çулти ывăлĕпе Атнерпе. Пицунда. 1977 ç.

## Ĕмĕт

Пирĕн ял çыннисем çывăхри тутар ялĕсемпе хĕр парса-илсе тăнă. Кун пек хутшăнса тăни сахал чăваш ялĕсенче. Тутар ялĕнченех куçса килнĕ пуль пирĕн мăн асаттесем тесе шутлатăп. Ял сиксе ларса Сиккасси пулса тăман-ши? Ялтан вунă çухрăмра, тутар ялĕ çумĕнчех çĕр пурччĕ тата пирĕн ялăн – лавсемпе кайса тырă вырса килсе тăнă каярах. Историне пăхсан питĕ интереслĕ, тĕпчес килет те вĕт ял ăçтан пуçланса кайнине… Хамăрăн тымарсене пĕлмеллех.

1921 çулта пирĕн ялта пăлхав пулса иртет. Продразверсткăпа килнĕ Малинкина хирĕç тăнă ял халăхĕ, камăн парас килтĕр тарпа çитĕнтернĕ тырра, çемйине выççа хăварса?! Пирĕн çынсем пит йăвашах мар çав. Икĕ кунтан яла салтаксем килеççĕ те 28 арçына çырмана илсе тухаççĕ, судсăр-следствисĕрех персе пăрахаççĕ. Ман асатте те лекнĕ унта. Юман юпа ларнă кив масар çинче. 2020 çулхи çĕртме уйăхĕнче çак çынсене чысласа гранитран палăк лартрăмăр. Ку тăванла вил тăприччĕ, пурне те пĕр шăтăка пытарнă. Манăн асатте те Артемий Трофимов, Пĕрремĕш тĕнче вăрçинче паттăррăн çапăçса сывă таврăннăскер, пилĕк ача ашшĕ, çакăнта ĕмĕрлĕхе канлĕх тупнă. Гранит плита çине картса сырнă текстра аслашшĕсемпе мăнаçланакан ăрăвăн, мăнукĕсен, сасси илтĕнет: «Сирĕн таса юнăрпа шăварăннă Сиккасси çĕрĕ пулăхлă та хăймаллă – пĕр туратран – пин турат».

Кукаçи пăлхав вăхăтĕнче хăтăлса юлайнă – пăлхав пĕтиччен Тăвай енче, Тĕмер ялĕнче пытаннă. Нэп пуçлансан шыв арманĕ илсе юлать вăл. Чипер пурăнас тенĕ пуль ĕнтĕ. Анчах малалла пурнăçра мĕн пулассине кам пĕлет? Арманĕнче нумай ĕçлесе те ĕлкĕреймен пуль…

Асаннен ашшĕ Сергей Мурзуков (мăрса йăхĕнчен) чиркӳ старости пулнă, Николай Васильевич Никольскипе çыру çӳретнĕ, Хусантан чăвашла куçарнă чиркӳ кĕнекисене илсе килсе сутнă. Гуманитари институчĕн архивĕнче упранаççĕ халĕ вăл çырусем. Асаннен шăллĕ, Василий Мурзуков, чиркӳ çумĕнче юрласа ӳснĕскер, совет саманинче ялта хор йĕркелесе нумай çул ертсе пынă.

## Шăпана улăштарнă йыхрав хучĕ

«Халăх тăшманĕн» манукĕ пулнă эпĕ. Юрать мана пит пырса тивмен çакă. Вĕренме кайма та пит чарман мана. «Тухăç хапхи» текен Хусанта ăс пухнине тем тери телей вырăнне шутлатăп. Ахальтен-им Хусанпа Чĕмпĕре культура йăвисем тенĕ хăй вăхăтĕнче? Наука сывлăшне унта чăннипех туяттăм. Шел кунта, Шупашкарта, эпĕ çав сывлăша туймастăп халĕ те. Наука шайĕнчен килет вăл. Хусанта тахçанхи традицисем упранаççĕ. Ученăйсен миçе ăрăвĕ вĕренсе тухнă-ши вăл университетран? Пирĕн Иван Яковлев та унта ăс пухнă.

Виççĕмĕш курсран пуçласа ирĕклĕ расписанипе вĕреннĕ эпе. Предметсене те суйласа илме ирĕк пурччĕ. Программăна кĕртнĕ кĕнекесене çеç вуламастăм, каярах кирлĕ пулать тесе никĕс хывса пынă ун чухнех. Хамăн пĕтĕмĕшле эрудиципе культурана ӳстерес тесе искусство, музыка историйесене тĕпчеттĕм. Пĕрремĕш курсри пек «виççĕ» паллăсем илесси пĕтрĕ ун чух. Чăваш литературине тĕпчеме тытăнтăм. Верентекенсем те ырлатчĕç эпĕ суйласа илнĕ темăсене. Каярах вара «Константин Мванов пултарулăхĕнчи романтизм» темăпа диплом ĕçĕ хатĕрлерĕм.

Пĕррехинче, К. К. Петров кандидат диссертацине хӳтĕленĕ чух, Хусана чăвашран Михаил Яковлевич Сироткин профессор пынăччĕ. Манăн преподаватель Николай Александрович Гуляев ман çине кăтартнăччĕ ăна ун чух: «Çак ачана ан çухатăр». «Пире специалистсем кирлĕ»,- терĕ Сироткин. Чăнах та, манса кайман вĕсем мана, веренсе пĕтерсен ченсе ячĕç. Манăн ун чухне распределенипе Тутарстанри Аксу районне тухса каймаллаччĕ. Тутар Республикин Çутĕç министрĕ патне

кĕрсе тăтăм йыхрав хучĕпе. «Эсĕ, ачам, хăвăн халăхушăн кирлĕрех», - терĕ те Махмутов алă пусрĕ, ăнăçу та сунчĕ. Шупашкарта Тĕпчев институтĕнче ĕçлеме пуçларăм çапла.



Сыравçăсемпе пĕрле. Г. Юмарт, Хв. Уяр, Н. Стуриков. «Силпи» кану çурчĕ. 1991 ç.

## Наука ĕçĕ киленĕç кӳрет

Ĕмĕр тăршшĕпех юратнă ĕçпе пурăнатăп – пĕрре те кичем мар вара наукăра. Хăш чух çакăншăн укçа тӳленинчен те тĕлĕнетĕп. Чун киленĕçĕ те-ха ку ĕç маншăн. Ку вăл – телей. Тĕнче литературин институчĕн çумĕнчи аспирантурăпа докторантурăра питĕ интереслĕччĕ. Чаплă ученăйсемпе калаçни, вĕсем ман ĕçсене сӳтсе явни халĕ те асра. Тĕпчевсем, критикăллă статьясем çырма çăмăл мар, паллах – теори енĕпе вăйлă аталанмалла малтан.

Вăхăт шăвать, пурнăç улшăнсах пырать. Петĕр Хусанкай сăнарланă хамăн юратнă Тилли сăмахĕсем чĕлхе

вĕçĕнчех: **«Чие тымарĕнчен пĕр чĕлĕм турăм, Кăпчанкăран эп аврăм чăпăкне, Савăнăçпа та, хуйхăпа та туртрăм, Сисмерĕм те кун-çулăм иртнине».**

## Библиографи (ĕçĕсем):


Артемьев, Юрий Михайлович. Ĕмĕр пуçламăшĕ [Текст] : (1900-1917 çулсенчи чăваш литература историйĕн очеркĕ) / Юрий Артемьев, 1996. - 295 с.

Артемьев, Ю. М. Ирĕк шухăшсем : критика статьисем / Ю. М. Артемьев. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке издательстви, 1991. – 207 с.

Артемьев, Юрий Михайлович. Пурнăç чăнлăхĕпе сăнарсен илемĕшĕн [Текст] : критика статйисемпе рецензисем / Ю. М. Артемьев, 1984. - 127, [1] с. с.

Артемьев, Ю. М. XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи чăваш литератури : (1900-1917 çç.) / Ю. М. Артемьев. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке издательстви, 1992. – 254 с.

Артемьев, Юрий Михайлович. Чăн тӳпере çич çăлтăр [Текст] : критикăллă статьясем / Ю. М. Артемьев. - Шупашкар, 2010. - 253, [2] с.

Артемьев, Юрий Михайлович. Шăпа карчĕсем [Текст] : литература тĕпчевĕпе критика статйисем / Юрий Артемьев. - Шупашкар, 2015. - 159 с.

Артемьев, Ю. М. Ытарайми пурнăç тĕсĕсем : статьясемпе тĕрленчĕксем / Ю. М. Артемьев. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке изд-ви, 1988. – 126 с.

Артемьев, Ю. М. Этем тивĕçĕ : критикăлла статьясен пуххи / Ю. М. Артемьев. – Шупашкар : Чăваш кĕнеке издательстви, 1980. – 112 с.

Артемьев, Юрий Михайлович. Страсть к полемике [Текст] : Ст., рецензии / Ю.М. Артемьев, 2003. - 190 с.

Артемьев, Ю. М. Константин Иванов: Жизнь. Судьба. Бессмертие / Ю. М. Артемьев. – Чебоксары, 2013. – 255, [1] с., [8] л. ил.

Артемьев, Ю. М. Становление социалистического реализма в чувашской литературе / Ю. М. Артемьев. – Чебоксары : Чувашское книжное издательство, 1977. – 160 с.

Артемьев, Ю. М. Сила притяжения земли / Ю. М. Артемьев // Çулталăк кĕнеки = Календарь года : 2009. - Чебоксары, 2008. - С. 192-195.

**Библиографи (ун çинчен):**

1. Чувашская Республика. Глава (2015- ; М. В. Игнатьев). О присуждении Государственных премий Чувашской Республики 2014 года : указ Главы Чувашской Республики [от 18 июня 2015 года № 85] : [о присуждении Государственной премии Чувашской Республики в области литературы и искусства Ю. М. Артемьеву за книгу «Константин Иванов: жизнь, судьба, бессмертие»] // Вести Чувашии. – 2015. –20 июня (№ 23). – С. 30 ; то же // Собрание законодательства Чувашской Республики. – 2015. – № 6, ч. 2. – Ст. 678. – С. 16.

2. Абрамов, В. Чунри хĕрÿлĕхпе ăс-хакăлри хăват / В. Абрамов // Хыпар. – 2001. – 30 кăрлач.

3. Артемьев, Ю. М. «Ĕмĕрĕпех вĕренме çуралнă эпĕ» / Ю. М. Артемьев ; И. Алексеева çырса илнĕ // Çамрăксен хаçачĕ. – 2016. – 24 чÿк (№ 46). – С. 5 : сăн ÿкерчĕк.

4. Артемьев, Ю. М. Юрий Артемьев: «Ăслă çын критикăна йышăнать» : [филологи наукисен докторĕпе калаçни / Ю. М. Артемьев ; И. Трифонова çырса илнĕ] // Сувар. – 2017. – 27 кăрлач (№ 3). – С. 4 : сăн ÿкерчĕк.

5. Артемьев, Ю. «Литература ĕçĕ тертлĕ, анчах пархатарлă...»" / Ю. Артемьев ; С. Суранов çырса илнĕ // Тантăш. – 1997. – 25 ака (№ 17). – С. 6. – (Кăмăлтан ; № 2).

6. Артемьев, Ю. Хальхи кунсем капла-ха, килес кунсем мĕнле-ши? / Ю. Артемьев // Тăван Атăл. – 2012. – № 5. – С. 106-112.

7. Артемьев, Ю. «Чапшăн пурăнмастăп...» / Ю. Артемьев ; М. Сениэль çырса илнĕ // Тантăш. – 1993. – 25 сент. (№ 38). – С. 5.

8. Артемьев, Ю. Чун-кăмăл апатне техĕмлĕ пĕçересчĕ / Ю. Артемьев ; пичете Н. Осипова хатĕрленĕ // Тăван Атăл. – 2012. – № 4. – Прил.: с. 2-10. – (Сунтал).
9. Артемьев, Ю. М. Юрий Артемьев: «Графомансем çанталăка улăштараймĕç» / Ю. М. Артемьев ; Н. Осипова хатĕрленĕ // Сувар (Тутарстан Респ.). – 2014. – 11 ака (№ 14). – С. 7.
10. Артемьев, Ю. Юрий Артемьев: «Кирпĕч-романсем çырмаççĕ паян...» / Ю. Артемьев ; Л. Филиппова калаçнă // Хыпар. – 1999. – 22 раштав.
11. Ачча, В. А. Халăхшăн ырă ĕç тăваççĕ / В. А. Ачча // Канаш ен. – 2012. – 13 кăрлач. – С. 1.
12. Георгиева, Н. Ăсчахăн сулмаклă тепĕр утăмĕ / Н. Георгиева // Хыпар. – 2015. – 17 февраль/нарăс. – С. 8.
13. Ялгир, П. Артемьев Юрий Михайлович // Ялгир, П. Литературный мир Чувашии / П. Ялгир. – Чебоксары, 2005. – С.
14. Прокопьев, В. Талантлă тĕпчевçĕ, тӳрĕ чунлă критик / В. Прокопьев // Канаш (Канаш р-нĕ). – 1994. – 7 ака.
15. Саламлатпăр! Чăваш литературин паллă тĕпчевçине Юрий Артемьева 70 çулхи юбилейĕпе // Тăван Атăл. – 2011. – № 1. – Прил.: с. 30-37. – (Сунтал).
16. «Ун лăпкăлăхĕ хăй йĕркеленĕ лăпкăлăх пек туйăнать...» : (Юрий Артемьев вăрттăнĕ пирки) / Ю. Яковлев [т. ыт. те] // Хыпар. – 2011. – 2 нарăс. – С. 4.
17. Федорова, О. Хисеплĕ ятпа чысланă / О. Федорова // Канаш ен. – 2017. – 23 çĕртме. – С. 2 : сăн ӳкерчĕк.
18. Хусанкай, А. П. Юрий Михайлович Артемьев : Литература тĕпчевçи, Чăваш Республикин патшалăх премийĕн лауреачĕ / А. П. Хусанкай, С. В. Журавлев // Самант. – 2016. – № 9. – С. 21-22.
19. Юмарт, Г. «Тавлашу туйăмĕ» / Г. Юмарт // Çамрăксен хаçачĕ. – 2004. – 3 авăн (№ 35). – С. 10.
20. Артемьев Юрий Михайлович // Кто есть кто : ученые Чувашского государственного университета им. И. Н. Ульянова. – Чебоксары, 2002. – С. 40.
21. Артемьев Юрий Михайлович // Ученые и сотрудники Чувашского государственного института гуманитарных наук, 1930-2005. – Чебоксары, 2005. – С. 15.
22. Артемьев Юрий Михайлович // Who is Who в России : [биогр. энцикл. успеш. людей России]. – 5-е изд. – Zug, 2011. –

С. 138.
23. Афанасьев, П. Артемьев Юрий Михайлович // Афанасьев, П. Писатели Чувашии / П. Афанасьев. – Чебоксары, 2006. – С. 34-35.
24. Васильев, Л. Его мир – самобытная эстетическая вселенная / Л. Васильев // Совет. Чувашия. – 2014. – 18 января. – Прил.: с. 4 : фот.
25. Григорьев, Н. Г. Артемьев Юрий Михайлович : 1941 // Григорьев, Н. Г. Писатели Канашского района Чувашии : (жизнь и деятельность замечательных людей) / Н. Г. Григорьев. – Чебоксары, 2017. – С. 95-108 : порт., фот.
26. Евдокимова, О. Судьба мастера / О. Евдокимова // Ульяновец. – 2001. – 16 февр.
27. Краснов, Г. Живем мы не ради славы / Г. Краснов // Артемьев, Ю. Страсть к полемике : ст., рец. / Ю. Артемьев. – Чебоксары, 2003. – С. 3-8.
28. Никифорова, В. В. Артемьев Юрий Михайлович / В. В. Никифорова // Чуваш. гуманит. вестн. – 2011. – № 6. – С. 233-237.
29. Они перешли рубеж времени // Совет. Чувашия. – 2000. – 12 янв.
30. Сергеев, Т. С. Артемьев Юрий Михайлович // Сергеев, Т. С. Канашцы – доктора наук / Т. С. Сергеев. – Чебоксары, 2000. – С. 22-26.
31. Тимуков, А. Н. Артемьев Юрий Михайлович / А. Н. Тимуков // Чувашская энциклопедия. – Чебоксары, 2006. – Т. 1 : А-Е. – С. 129.
32. Ялгир, П. Артемьев Юрий Михайлович // Ялгир, П. Литературный мир Чувашии / П. Ялгир. – Чебоксары, 2005. – С. 14.